# Трак ен символĕсем



Красноармейски районĕн гербĕ



Красноармейски районĕн ялавĕ

Герб — геральдика щичĕ, унăн хĕрлĕ уйĕнче геральдикăлла ылтăн тĕслĕ, икĕ юплĕ сенĕк евĕр хĕрес (поляксен геральдикинчен илнĕ, унпала тач çыхăннă), сылтăм енче — Упи паттăрăн кĕмĕл тĕслĕ илемĕ. Гербăн сулахай енчи кĕтесре — Чăваш Патшалăх Ялавĕ те вырăн тупнă.

Геральдикăра хĕрлĕ тĕс ĕçе юратнине, паттăрлăха, илемлĕхе пĕлтерет. Ылтăн — хастарлăх, çирĕплĕх, чеченлĕнÿ палли. Кĕмĕл тĕрĕслĕхе, тасалăха, шанчăклăха палăртать.

Ялав — районăн официаллă символĕ. Вăл хĕпхĕрлĕ, тăваткал кĕтеслĕ пусма, унăн тăршшĕпе сарлакăшĕ 2:3-пе танлашать. Ялав çине районăн гербĕ çинчи ÿкерчĕксене вырăн панă: сылтăм енче кĕмĕл тĕслĕ шлем, сулахай енче вара, ана тăршшĕпех, ылтăн тĕслĕ икĕ юплĕ сенĕк евĕр хĕрес.

Э. Юрьев хăй пурăннă вăхăтра çапла калатчĕ:

— Трак ен гербне тума тытăнтăм. 2 эскиз хатĕрлерĕм (сăмах май вăл эскизсем халĕ Э. Юрьев ячĕллĕ музейра упранаççĕ), анчах тем килĕшсех каймасть-ха, юсамалла, халăха юрăхлă шая лартмалла. Вăхăт çитменнине пулах ĕçе вĕçлейместĕп. Заказсем питĕ нумай, питĕ яваплă ĕçсем, пурне те ĕлкĕрмелле.

Хăй палăртса хунине Элли Михайлович вĕçне çитереймерĕ — вилĕм çави ăна вăхăтсăр касса кайрĕ. Вăл шутланисене унăн вĕренекенĕ Вадим Шипунов ÿнерçĕ-геральдист пурнăçларĕ. Парижри Пĕтĕм тĕнчери Геральдика академийĕнче экспертиза витĕр тухнă, вĕсем ĕмĕрлĕхех Трак ен символĕсем пулса юлчĕç.

Мухтав юррийĕ те (гимн) пур тракенсен. Ку тăрăхри çĕр-шыва, улăх-çаранне, пархатарлă та ĕçчен çыннисене Л. Антонов поэт-лирик витĕмлĕ те ĕнентерÿллĕ, халăха юрăхлă мухтаса çырса кăтартнă. Сăмахĕсене кĕвве хываканĕ — Кушкăра çут тĕнчене килнĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, хăй тĕллĕн вĕреннĕ И. Степанов композитор.